**Кистенĕм çук**

Сăртсем, уйсем, вăрмансем хыçĕнче
Ялсем лараççĕ ешерсе.
Эп Шупашкарти çӳллĕ сăрт çинче
Пăхса тăратăп тинкерсе...

Асилеп яла. Ир пуçласа каçчен
Чупса çуреттĕм пикенсе.
Эп хулиган... тытаттăмччĕ кистен
Вут пек хĕрсе тӳпелешме.

Анчах кистен.. çĕрсе пĕтрĕ паян,
Кистенĕм çук ман алăра. —
Кала, мĕн-ма хĕрсе çапан? —
Текен сас пулмĕ таврара...

Кистен вырăнне çут шыв хĕрне анса
Эп тупрăм янракан кĕсле.
Çемçен, ӳсен яш хĕр пек вăтанса
Юрра пуçларăм чĕкеçле...

Чăшăл хăях манран аякра мар,
Савса çемçетрĕ сассăма.

Чăшăл хăях юратнă тус вăл ман —
Хыт ыталам çĕршывăма...

Йăлтăртатса ларан чиркÿшĕн мар,
Халь юрататăп Кавала.
Унта пур ман чăшăлтатан вăрман,
Ана паратăп хам алла...

Кашни ирех хĕвел хĕртсе тухсан
Канма аван çаран çинче.
Пулас этем — каланă пек пулсан
Мĕн-ма юрлас мар çĕр çинче?!

*Рзай, В. Кистенĕм çук : [сăвă] // Рзай, В. Çырнисен пуххи/ В. Рзай. – Шупашкар, 2004. – С. 58.*